4752 41-16

МИХАИЛ БЕЛОВ

# ПУРНĂÇ ПУÇЛАМĂШĔ

ЧАССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

МИХАИЛ БЕЛОВ

# ПУРНĂÇ ПУÇЛАМĂШĔ

**И. Тукташ калавĕ тăрăх çырнă**

ÇИЧĔ КАРТИНĂЛЛĂ ДРАМА

…ская
Книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941.

## ВЫЛЯКАНСЕМ

Ваççук, чухăн çын ачи.

Ульяна, чухăн çын хĕрĕ.

Ухвине, Ульяна амăшĕ.

Хветут мучи, хутор хуçи утарĕнче хурт-хăмăр пăхса пурăнакан старик, кăвак çÿçлĕ, 70 çулта.

Санюк, Ульянапа пĕр тантăш хĕр, Ульяна тусĕ.

Татьян, Ульяна йăмăкĕ.

Элеçук, хутор хуçи ывăлĕ.

Мĕтри, Элеçук тусĕ.

Старшина.

Стражник.

Староста.

Тиек.

Конвоир.

1-мĕш конвоир.

2-мĕш конвоир.

Хĕрсем, йĕкĕтсем, пуху халăхĕ т. ыт. те.

## ПĔРРЕМĔШ КАРТИНА

Ульянасен пĕчĕк çеç пÿрчĕ. Пÿрт умĕнче çил хапхаллă килкарти. Кутник çинче Ульяна йăмăкĕ сывăрать. Ульяна чÿрече умĕнче тăрать. Салхуллă юрă юрлать.

МУЗЫКА

Уйрăмах та çуралса
Пĕрле ÿссе,
Мĕншĕн уйрăлмалла
Ай, тунă-ши.

**Ваççук** (сцена хыçĕнчен)

Çук, уйрăлмăпăр,
Çивĕнмĕпĕр, тусăмçăм.
Ĕмĕрлĕхе пĕрле,
Ĕмĕрлĕхе пĕрле
Ай, пурнăпăр.

**Ульяна** (чÿрече витĕр пăхса)

Çакă çутă тĕнчере
Ай, çуралса,
Мĕншĕн хĕн-хур,
Мĕншĕн хĕн-хур
Тÿсмелле, ай,
Тунă-ши?

**Ваççук**

Савнă тантăшăм,
Савнă тусăмçăм,
Ялан пусмăр курмăпăр,
Ялан хĕн-хур тӳсмĕпĕр,
Сивĕнмĕпĕр, тусăмçăм,—
Ĕмĕрлĕхе пĕрле
Ай, пурнăпăр.

Музыка хуллен хурлăхлăн янăрать.

**Ульяна** (ч ӳ р е ч е в и т ĕ р т и м л ĕ н п ă х с а). Ваççук темшĕн кунта килмĕрĕ... Аннене курчĕ пулас... Именчĕ пулас...

Музыка хытăрах выляма тытăнать.

Хурама та пĕкĕ,
Ай, йĕс ункă,
Çурма çула çитсен,
Ай, хуçăлчĕ.
Айванах та пуçăм,
Çамрăк чунăм,
Çурма çула çитсен,
Ай, хур пулчĕ.

Ухвине кĕрет.

***Ухвине***. Эх, хĕрĕм... Çапла, ĕмĕр хурланса, ĕмĕр тертленсе пурнăпăр çав... Эс юрланă пекех, пирĕн пурнăç та çурма çула çитсен хур пулчĕ... Аçу чунне те пӳлĕхçĕ упраса усраймарĕ. Вăл пуранна пулсан, капла пулман пулăттăмăр... Ак халь, камăн вăй çитет, пурте пирĕн çине тăрăнаççĕ. Юлашки анана, аçун

ят анине, Салакайӑк хуторне касса пачӗҫ. Эх, хӗрӗм, епле пурнӑпӑр ӗнтӗ?..

**Ульяна.** Ан кулян, анне... Сывӑ пулсан, пурнӑпӑр епле те пулин... Кӗрӗшсе тырӑ вырма, утӑ ҫулма, авӑн ҫапма ҫӳрӗпӗр. Чипер сывӑ пулсан, ҫынсенчен катӑк-пӑсӑк пурӑнмӑпӑр...

**Ухвине.** Эх, хӗрӗм... Калама ҫеҫ аван... Епле пурнӑпӑр ҫын ӗҫне ӗҫлесе? Ҫӑкӑр-тӑварӗ, ҫийӗ-пуҫӗ,вутти-шанки,—пурте кирлӗ вӗт пурнӑҫра. Ак паян та ял куштанӗсем килсе карӗҫ, хырҫӑ тӳлемелле, теҫҫӗ. Ӑҫтан тупӑпӑр ӗнтӗ эпир вӑл укҫана?.. (Й ӗ р е т.)

**Ульяна** (а м ӑ ш н е л ӑ п л а н т а р а с ш ӑ н). Ан йӗр, анне, ан йӗр... Пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлӗп. Пӗр кун та выҫӑ лартмӑп... Ан йӗр, лӑплан, анне...

**Ухвине** (х у р л ӑ х л ӑ н). Эх, хӗрӗм-пепкеҫӗм! Хӑть сана та пулин арҫын чунӗ паман-ҫке турри...

**Ульяна** (т ӳ с е й м е с ӗ р й ӗ р с е я р а т ь). Ах, аннеҫӗм, аннеҫӗм!.. Ӑҫта-ши ку хурлӑхлӑ пурнӑҫӑн пуҫламӑшӗ, ӑҫта-ши вӗҫӗ?..

**Ухвине** (й ӗ м е ч а р ӑ н с а). Е, ҫитӗ ӗнтӗ... Чарӑн... Пурнӑҫӑн ун ни пуҫламӑшӗ, ни вӗҫӗ ҫук. Тӗнчере хурлӑх куракан пӗр эпир ҫеҫ мар. Пӳлӗхҫӗн ирӗкӗ ҫапла, ун ирӗкӗнчен никам та иртеймен. Ҫырни ҫапла пулнӑ-тӑр, шӑпамӑр ҫапла килсе тухнӑ-тӑр...

**Ульяна** (ӗ с ӗ к л е с е й ӗ р н ӗ х ы ҫ ҫ ӑ н, к у ҫ ҫ у л л ӗ к у ҫ ӗ с е м п е а м ӑ ш ӗ ҫ и н е п ӑ х а т ь т е, ҫ и л л ӗ н к ӑ ш к ӑ р а т ь). Ҫук, анне! Пӳлӗхҫӗ никама та пӗр-пӗринчен ни мала, ни кая

туман... Пӳлĕхçĕ хушман вăрçăра вилнĕ аттен ят çĕрне Салакайăк хуторне касса пама. Турă хушман пирĕн юлашки...

**Санюк** (сасартăк чӳречерен шаккаса). Ульяна килте-и?... Мĕн эсĕ ку вăхăтченех пӳртре супса ларатăн? Сансăр пуçне ни вăйă кĕрнекĕ, ни ташă çаврăнăшĕ килмест пирĕн... Атя хăвăртрах!..

**Ухвине** (Ульянана). Е, çитĕ ĕнтĕ... Ав, вăййа чĕнме килчĕç, пуçтарăн тата...

**Санюк.** Атя, Ульяна, хăвăртрах!..

**Ульяна.** Халех... Тухатăп...

Ульяна куçĕсене саппун аркипе шăлса типĕтет те, сапаланчăк çӳç-пуçне майлакаласа, урама тухать.

ЧАРШАВ

## ИККЁМЁШ КАРТИНА

Çуллахи лăпкă каç. Тӳпере çăлтăрсем ялкăшаççĕ. Çамрăксем алăран-алă тытăнса уяв юррисем шăрантараççĕ.

МУЗЫКА

Уява кĕмен, ай, хĕрĕсен,
Уява кĕмен, ай, хĕрĕсен
Пуçне сурпан çыхар-и,
Пуçне сурпан çыхар-и.
Уява кĕмен, ай, хĕрсене,
Уява кĕмен, ай, хĕрсене
Хĕртен арăм тăвар-и,
Хĕртен арăм тăвар-и.
Сарă, сарă, ай, хĕрсене,
Сарă, сарă, ай, хĕрсене
Савни валли çуратнă,
Савни валли çуратнă.
Хура, хура, ай, хĕрсене,
Хура, хура, ай, хĕрсене
Хурăнташшăн çуратнă,
Хурăнташшăн çуратнă.

Çак хушăра Санюкпа Ульяна килсе кĕреççĕ.

**Йĕкĕтсем.** Ак, Ульяна та килчĕ!..

**Хĕрсем** (х а в а с с ă н). Ульяна, ара эпир сансăр пуçне пĕр путлĕ вăйă та пуçлаймастпăр вĕт...

**Элеçук.** Кил, Ульяна, хам çумма!

**Йĕкĕтсем** (виртлесе). Ульяна, ан тăрах сăран атăллă йĕкĕт çумне, тем курăн...

**Хĕрсем** (йĕкĕлтесе). Хура йыттăн хӳри кукăр, теççĕ.

**Пурте** (ахăлтатса). Ха-ха-ха! Хи-хи-хи!..

Ульяна икĕ хĕр хушшине кĕрсе тăрать те, уçă та янăравлă сассипе юрă пуçлать.

МУЗЫКА

**Ульяна**

Хурăн варта хур пусрăм та,
Хурăн варта хур пусрăм,—

**Пурте**

Вăрă тесе ан калăр,
Вăрă тесе ан калăр.

**Ульяна**

Вăй пуçласа вăй калап та,
Вăй пуçласа вăй калап,—

**Пурте**

Шухрах тесе ан калăр,
Шухрах тесе ан калăр.

**Ульяна**

Хура шăрçа хушшине те,
Йĕпкĕн мерчен ан тирĕр,

**Пурте** (а л ӑ ҫ у п с а)

Ара ҫав, ҫапла ҫав,
Йӗпкӗн мерчен ан тирӗр.

**Ульяна**

Пуян хӗрӗ теейсе те,
Пуҫ ывӑтса ан тӑрӑр,

**Пурте** (а л ӑ ҫ у п с а)

Ара ҫав, ҫапла ҫав,
Пуҫ ывӑтса ан тӑрӑр.

**Ульяна**

Чухӑн хӗрӗ теейсе те,
Пуҫа усса ан тӑрӑр,

**Пурте** (а л ӑ ҫ у п с а)

Ара ҫав, ҫапла ҫав,
Пуҫа усса ан тӑрӑр.

**Хӗрсем**

Сӗрсе ҫиме пыл чипер те,
Пуҫса ҫиме ҫу чипер,

**Йӗкӗтсем** (а л ӑ ҫ у п с а)

Ара ҫав, ҫапла ҫав,
Пуҫса ҫиме ҫу чипер.

**Хӗрсем**

Вылямашкӑн, кулмашкӑн та
Кӑвак куҫлӑ хӗр чипер,

**Йĕкĕтсем** (а л ă ç у п с а)

Ара çав, çапла çав,
Кăвак куçлă хĕр чипер.

Автансем авăтни илтĕнет. Шăп çурçĕр. Уйăха вăхăт-вăхăт пĕлĕтсем хупăрласа иртеççĕ. Вăйă карти чарăнать. Пурте арпашăнаççĕ. Шавлаççĕ. Кулаççĕ.

**Ульяна.** Килсене саланма та вăхăт ĕнтĕ...
**Санюк.** Автансем те авăтма пуçларĕç...
**Йĕкĕт.** Ир халĕ, ир. Тăхтăр пăртак, юрлăр тата...
**Санюк.** Çурçĕр те иртрĕ ĕнтĕ.
**Ульяна.** Айюк, айтăр хăвăртрах таврăнар.

Музыка. Ульяна юрă пуçласа ярать. Пурте юрласа тухса каяççĕ.

**Ульяна**

Авăтать-çке куккук, авăтать,

**Пурте**

Çул хĕрринчи пĕччен маякра.
Асăнман мар, тусăмçăм, асăнатăп,
Асăнатăп пĕр-пĕччен ларнă вăхăтра.

Шăпланать. Пит инçетре аран çеç юрă илтĕнет.

**Х о р**

Ĕнтĕ чĕкеç вĕçет, чĕкеç вĕçет,—
Юхăм шыван çулне пÿлеймест.
Ĕнтĕ савни кĕтет, савни кĕтет,—
Сарă хĕре кĕтсе илеймест.

Сцена пушă. Пĕр авка вăхăт иртнĕ хыççăн Хветут мучи килсе кĕрет. Чĕлĕмĕ ăшне табак тултарса ăвăпа чĕртет. Çамрăксен юррипе музыка сассине итлет. Унтан вара хăй тĕллĕн калаçма тытăнать. Вăл калаçнине Ваççук вăрттăн итлесе тăрать.

**Хветут мучи.** Çук, юрламаççĕ вĕсем, макăраççĕ... Мĕнпур тĕнче çапла, юрлатăп, тет, а хăй—макăрать. Ирĕклĕ кайăксем çеç юрлам тесе юрлаççĕ. Çук! Юрламастăр эсир, çамрăксем, макăратăр. Çапла ĕнтĕ пирĕн пурнăç кустăрми. Çуллен—хĕлĕн-çăвĕн, кунĕ-кунĕпе, йĕре-йĕре... улпут ĕçне ĕçлеççĕ мĕскĕнсем, юлашкинчен вара—вилĕм... (Хуллен кăна каска çине пырса ларать.) Эх-ха-хах!.. Ним тума та хал çук-çке. Телейĕ пирĕн çаплалла, куран...

МУЗЫКА

И, çилсем вĕрет, вичкĕн çил вĕрет,
Вăйлă çăмăрсем капланса килет.
Ултавах тĕнчи, йывăр самани
Пирĕн чунсене тыткăна илет.

Музыка чарăнать. Ваççук кĕрет.

**Ваççук.** Аван-и, Хветут мучи? Мĕн пит тарăн шухăша кайса ларатăн?

**Хветут мучи.** Э, эс-иç ку, Ваççук ывăлăм... Пурăнап-ха хуллен кăна. Утаралла кайма тухнăччĕ те... Çамрăксем юрланине ытараймасăр итлесе лартăм...

**Ваççук.** Утаралла уттаратăн эппин?

**Хветут мучи.** Çавăнта кайма тухрăм çав. Унта хутор хуçи ывăлĕпе, хай, Элеçукпа куштан Мĕтри сим-пыл лакса юлчĕç-ха. Çавна калап, Ваççук ывăлăм... Сим-пыл пуçĕсене кайма пуçларĕ пулас та... Эрех илме хăваласа ячĕç... Мĕн тăвăн, ним тума та çук. Кашни кун пырса ĕçеççĕ, кашни кун мана хупаха хăвалаççĕ. Самани çаплалла мар-и... Ваттисем мĕн ĕлĕкренех, халран кайиччен ĕçле, тенĕ. Çынран пулăшу ан кĕт, тенĕ. Итлемесен—юрамасть, какникак—хуçа ывăлĕ вĕт-ха...

**Ваççук.** Çук, Хветут мучи, апла мар вăл. Ваттисем ĕлĕк ăна урăхла шухăшпа каланă пуль, тетĕп эпĕ. Вĕсем,—кĕрешӳре çĕнтериччен кĕреш... Пуянсенчен нихăçан та çăлăнăç ан кĕт, тенĕ пуль. Унăн тĕп шухăшĕ çавăнта пырса тивет пек, ман шутпа.

**Хветут мучи.** Эс калани тĕрĕсрех-тĕр теп çав хам та. Çапах та—утас-ха. Вăл сĕмсĕр сĕтĕрĕнчĕксенчен тем курса тăрăп. Сывпул, Ваççук ывăлăм. (К а я т ь.)

**Ваççук.** Чипер кай, Хветут мучи... (П а у з а.) Эх, мĕскĕн старик! Ирттерет ĕмĕрне хутор хуçи утарĕнче... (П а у з а.) Каярах юлтăм, куран. Мана кĕтетпĕр терĕ-çке... Ниушлĕ килĕсенех кайрĕç-ши?.. Çук... Пĕр-пĕр тăкăрлăкра тăраççĕ пуль-ха вĕсем. (К а я т ь.)

Ульянапа Санюк кĕреççĕ.

**Ульяна.** Чим-ха, Санюк, тата кăшт тăрар...

**Санюк.** Элле кама та пулин кĕтетĕн-им эсĕ?

**Ульяна.** Ав, хыҫалтан ура сассисем илтӗнеҫҫӗ... Хамӑр кас хӗрӗсем мар-ши, тетӗп.

**Санюк.** Ҫук, Ульяна, хӗрсене мар, хӑвӑн Ваҫҫукна кӗтетӗн пуль-ха эс... Ҫапла вӗт, Ульяна?... Ҫапла-и?...

**Ульяна** (*именерех*). Ҫапла, Санюк. Вӑл пире ӑсатма килетӗп тенӗччӗ те... Темшӗн, вӑрах тӑчӗ пит... (*Ҫак самантра кӗтмен ҫӗртен ӳсӗр Элеҫук килсе кӗрет*).

**Элеҫук.** Мӗн иксӗр кӑна сӗмленсе тӑратӑр, сар хӗрсем? Ай хӑвӑра валли теветкел йӗкӗт тупаймарӑр-и? Апла пулсан—хамӑр питӗ лайӑх ӑсатӑпӑр.

**Ульяна** (*виртлесе*). Куҫу курать пулӗ те, шӑлу витмӗ ҫав.

**Элеҫук.** Мӑйӑра катса пӑхмасӑр шӑл витнипе витменнине пӗлме ҫук. Ӑҫта-ха, хулӑнтан ункӑланам эппин... (*Мӑнаҫлӑн Ульяна хулӗнчен пырса уртӑнать*).

**Ульяна** (*Элеҫука пӗрех аяккалла тӗртсе*). Сӑпсаланса ан ҫӳре! Хурчӑкапа акӑш нихӑҫан та пӗрле ҫӳремеҫҫӗ.

**Элеҫук** (*ҫиленсе*). Питӗ ҫӳлтен вӗҫетӗнҫке, эс, Ульяна... Анчах мӗнле турат ҫине пырса ларӑн-ши...

**Ульяна.** Тӗнче пысӑк... Лармалли вырӑн тупӑнӗ.

**Элеҫук** (*хӗрсе*). Вӑйпа тытса лартас пулсан мӗн тӑвӑн? (*Хӑй сӑпса пекех Ульянапа Санюк ҫумне ҫыпҫӑнать*). Ӑмӑрткайӑк епле ҫӳлте вӗҫет те, пурӗпӗр сунарҫӑсем унӑн ҫунаттине персе хуҫаҫҫӗ.

**Ульяна.** Темĕн, пырне лармĕ-ши теп...

**Элеçук.** Апла-тăк, кăтартам-ха эп сире ăмăрткайăкне! (Çиллине шăнараймасăр сасартăк Ульянана пилĕкĕнчен ярса тытса, хулпуççийĕ çине çавăрса хурать те, вăртах каялла çавăнса, тăкăрлăк пуçĕнчи çырма еннелле кашкăр пек, тапса сикет. Санюк, юлташне çăлма тесе, Элеçук хыççăн чупма тытăнать, анчах ăна Мĕтри пытанса тăнă çĕртен тухса, хăрах аллипе хулĕнчен пăчăртаса тытать те, тепĕр аллипе çăварне хупласа хурать).

**Ульяна** (сцена хыçĕнче хăранă сасăпа). Хура-ах!.. Çăлăра-а-ах!..

**Санюк** (вăйсăр сасăпа). Хура-ах! Çăлăра-ах!.. (Кăшкăрнă сасса илтсе, Ваççук чупса кĕрет).

**Ваççук** (Мĕтри çине араслан пек сиксе). Ак сана, выçă кашкăра! Ак сана!..

**Мĕтри** (аптăраса). Элеçук, кил кунта!.. Ваççук хĕнет!.. (Элеçук хашкаса чупса кĕрет те, тÿрех Ваççука пырса çулăхать. Ун хыççăн Ульяна та чупса кĕрет. Пуçланать çапăçу).

**Санюк.** Мĕн пăхса тăран, Ульяна?!. Пар чулпала пуçĕнчен! (Ульяна тавçăрса илсе, Элеçука çÿçĕнчен ярса тытса каялла сĕтĕрме пуçлать. Çак самантра Ваççук çиçĕм пек вăртлатса çавăнса,

Элеçукпа Мĕтрине, иккĕшне те, таçта çитиех ывтăнтарса ярать).

**Ваççук.** Ан сыхланăр, сĕлĕхсем! Иксĕрĕнне те пуç мимисене мимĕрлентерсе хăварăп!

**Элеçук** (вăркăнса кайнă вырăнтан тăрса Ваççука юнать). Ан мухтан, Ваççук, вăюпала! Хăçан та пулсан пурĕпĕр лекĕн пирĕн серепене! (Мĕтрипе иккĕш те тухса шăваççĕ.)

**Ваççук** (уçă кăмăлпа). Ну, хĕрсем, чипчиперех сĕтĕрсе каятчĕç вĕт сире арлансем хăйсен шăтăкне.

**Ульяна.** Вăл усала пурĕпĕрех чĕррĕн парăнмастăм. Халĕ те питне-куçне чĕп-чĕр юн пуличченех тăрмаласа пĕтертĕм. Пайтахчен ухути пулмĕ-ха ман çумма çыпçăнма.

**Санюк.** Эх, тантăшăм, ун пек ан кала: хура йыттăн хўри кукăр, теççĕ, ăна пĕртте шанма каламан. Пуян ывăлне те нихăçан та ан шан.

**Ваççук.** Тĕрĕс, Санюк. Хура ăшчиклĕ этемĕн чĕри пăрçа хутаççи мар. Ăна пĕр тытса, пĕр уçса пăхаймăн. Асăрханарах çўрĕр...

**Санюк.** Вăл паллах ĕнтĕ... Ну, ĕнтĕ... Эсир юлăр. Эп киле кĕретĕп. (Ваççукпа алă тытсасывпуллашать). Ульяна, атя-ха самантлăха, пĕр сăмах каламалли пур.

**Ульяна** (хавассăн). Ваççук, эс пăртак кĕт эппин. Эп халех калле килетĕп.

**Ваççук.** Юрĕ, юрĕ... (Санюкпа Ульяна тухса каяççĕ. Пауза.) Мĕн-ши ку? Юрату-ши? Е харсăр çамрăк юнăн хумханăвĕ-ши?

Ӑна та, кӑна та тавҫӑрса илейместӗп. Эпӗ халиччен юрату сисӗмлӗхӗ мӗнле пулнине нихӑҫан та курса пӑхман. Ҫавӑнпа та-и, тен, чӗре мӗншӗн ачашшӑн хӗсе-хӗсе килнине те, кӑкӑрӑм мӗншӗн хӑвӑрт-хӑвӑрт ҫӗкленнине те ӑнланма пултараймастӑп. Анчах ҫакна ҫеҫ туятӑп,—питех те аван-ҫке Ульянапа юнашар ларма! Унӑн ҫемҫе, ӑшӑ аллисене чӑмӑртанӑ чух... темшӗн, чӗре калама ҫук хӗсе-хӗсе килет... Кӑкӑр та ҫаплах, хӑвӑрт-хӑвӑрт ҫӗкленсе илет. Ман унпа татах та ҫывӑхрах пулас килет... (П а у з а.) Эх, самани...

МУЗЫКА

И, ҫилсем вӗрет, вичкӗн ҫил вӗрет,
Вӑйлӑ ҫӑмӑрсем капланса килет.
Ултавах тӗнчи, йывӑр самани
Пирӗн чунсене тыткӑна илет.

Ульяна кӗрет те, ним чӗнмесӗр, Ваççук юрланине итлесе тӑрать.

Улӑхри лаши, ҫӳрен-ех лаши,
Унӑн уринче тимӗр-ех тӑлӑ.
Маттурах каччи, сарӑ-ях ачи,
Унӑн уринче тимӗр-ех тӑлӑ.

Тимӗр-ех тӑлӑ, ула-ях ҫулӗ...
Ӗмӗрӗ иртет Ҫӗпӗр ҫӗрӗнче.
Ҫӗпӗр ҫӗрӗнче, патша тӗрминче,
Читлӗхе хупнӑ ӑмӑрткайӑк пек...

**Ульяна** (Ваççук юрласа пĕтерсен). Кĕтсе ывăнтăн пуль эс мана, Ваççук?

**Ваççук.** Çук-çке. Часах килтĕн эс, Ульяна. (Аллисене ерипен саратьте Ульянана пилĕкĕнчен ыталать. Унтан хăй çумне чăмăртать).

**Ульяна.** Ан тив, Ваççук... Кирлĕ мар апла хăтланма...

**Ваççук.** Ан хăра, Ульяна... Эп сана нихăçан та тивес çук... (Пауза.)

**Ульяна.** Итле-ха, Ваççук, эсĕ халь çеç мĕнле çĕнĕ юрă юрларăн çав? Камран илтрĕн эс ăна?

**Ваççук.** Ăна-и? Ăна мана ача чухнех Хветут мучи юрласа панăччĕ. Тахçан ĕлĕк, утмăл-çитмĕл çул каярах, пĕр пуç кайнă çын юрланă, тет, ăна çапла.

Ульяна вăрăммăн сывласа илет те Ваççук çумне лăпчăнать.

ЧАРШАВ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

## ВИÇÇĔМĔШ КАРТИНА

Ял варринчи пĕчĕкçеç хурал пӳрчĕ. Ун умне пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех халăх пухăнать. Пуху. Арçынсенчен кăшт аяккарах—пилĕк-ултă хĕрарăм. Ульяна хурал пӳрчĕ умĕнчи ват йăмра хыçĕнче пытанса тăрать. Çынсем хушшинчен пустав халатлă, кăкăрĕ çине пысăк çаврака çутă медаль çакса янă хулăм кĕлеткеллĕ старшина, ун хыçĕнчен çут тӳммелĕ мундир тăхăннă стражник тата качака сухаллă лутака мăнтăр староста малалла тухса сĕтел хушшине кĕрсе лараççĕ.

**Старшина** (к ĕ р е ç е  п е к  с а р л а к а  х у р а  с у х а л н е  ш ă л к а л а с а,  с т а р о с т а  е н н е л-л е  а л л и п е  с ĕ л т е т). П у ç л а !..

**Староста.** Ну, ял-йышсем! Сире çак хыпара пĕлтерме пуçтартăмăр... Кам куланай-хырăç укçисене тӳлесе татман—паян юлашки срок. Акă, вулăсран килчĕç пирĕн пата куланайшăн. Паян тӳлесе татмасан, заклад йăтмалла пулать. Ăнланатăр-и?..

Пуху халăхĕ кăштах хумханса илет. Анчах никам та çăвар уçса чĕнмерĕ.

**Староста.** Тӳлемесен—заклад йăтатпăр. Ăнлантăр-и, тетĕп сире?

**Сасă.** Ара, çаплах ĕнтĕ вăл... Раз закон хушать-тĕк, нимĕн те тăваймăн, тӳлесех пулать.

**Ваççук** (х ы ç а л т а н,  х а л ă х  х у ш ш и н ч е н). Камăн пуррисем тӳлеччĕр. Пирĕн нимĕн те

çук! (Ульяна Ваççукеннелле çаврăнса тăрать).

**Старшина** (сассине хăпартса). Кам сÿсленки лĕкĕртетет унта? Тух малалла!.. (Çамрăксем Ваççука хÿме пек хупăрласа хураççĕ). Кам калаçать, тух кунта!..

Пуху шавлама тытăнать.

**Сасăсем:** — Кĕлĕмçĕсемшĕн ял халăхĕ винават мар!..

— Эпир тахçанах тÿлесе татнă хамăр парăмсене!...

— Вĕреннĕ вĕсем, ял çинче йытăлла, янтă пурнăçпа пурăнма.

**Староста** (чышкипе сĕтел çине çапса). Лăпланăр теççĕ сире! Илтетĕр-и?.. (Умĕнче выртакан симĕс папкине çĕклесе). Лăпланăр! Илтетĕр-и?

**Старшина** (ура çине сиксе тăрать. Вăкăр пек мĕкĕрсе, чышкипе хăмсаркалать). Молча-ать! Молча-ать!..

**Стражник** (сÿсленчĕк уссине вылянтарса). В чем дело? В чем дело?...

**Староста** (симĕс папки ăшĕнчен пĕр хут тятки кăларса). Шăпланăр! Шăпланăр!. Ак хамăр вуласа парăпăр камăн-камăн мĕн чул юлнине... Ăнлантăр-и? (Аллинчи хутне старшинана тыттарать).

Пуху шăпланать.

**Старшина** (хутне тиеке тыттарса). Ме, вула!

**Тиек** (куçлăхне сăмси вěçне утлантарса лартатьте хěрарăмăнни пек çинçе сассипе вулама пуçлать). Тимěрçě Ванькийěн икě манит... Сăвăр Куçмийěн манит те хěрěх пус... Алсатуль Эрхипěн...ěм...ěм...виçě манит...

Халăх хумханма пуçлать.

**Сасăсем**:—Суятăн! Виçěм кун кăна икě манит килсе хыврăм. Сирěн тěпсěр кěсъěре нихăçан та тултараймăн.

— Ман çинче те икě манит пулма тивěç мар.

— Хăйсен кěсъине чикеççě вěсем!..

— Вěсене нихăçан та парса çитерес çук!..

**Тиек**. Э-э... Тю-тю-тють... Тӳле-ха малтан укçуна.

Ваççук хăй умěнче тăракан халăха, аллипе сула-сула, темěн каласа ăнлантарать.

**Старшина** (Ваççук халăха ăнлантарнине курса). Кам унта халăха пăтрататть? Тух кунта!..

Пуху халăхě çěнěрен хумханса илет.

**Ваççук** (арăслан пек халăх хушшинчен сиксе тухса). Эпě! Анчах эп мар халăха пăтратаканни, эсир вăл! Мěн тăвас тетěр, тăвăр, эпě сирěн умăрта!

Старшина стражник çине пăхса куç хěсет. Стражник çавăнтах чěн пиçиххи çумěнчен саламатне вěçерсе, Ваççука пуç урлă туртать.

**Стражник.** А-а, бунтовать!...

**Ульяна** (Ваççука саламатпа çапнине курса). Ай!..

**Ваççук** (стражник умне тата çывăхарах пырса, пир кĕпе çухине татса ярать). Çап! Татах çап! Анчах çапма пĕлмен пушă каялла çавăнса ан тивтĕр!

**Стражник** (аллинчи саламатне каллех çӳлелле çĕклесе). Аха!.. Бунтовать!..

**Ваççук.** Çап, атя, çап! Эсир хура халăх юнне ĕçме мĕн ĕлĕкренех вĕреннĕ ĕнтĕ! Анчах, çитĕ-ха вăхăт пĕрре!.. Халăх!..

Сасартăк малта тăракан пуянсем Ваççук çине сиксе ларaççĕ. Çавăнтах хыçалта тăракан маттур йĕкĕтсемпе çилĕллĕ стариксем пуянсене кĕпĕрлентерсе тӳпелешме тытăнаççĕ.

**Стражник** (аптранипе çутă хĕçне хăй пуçĕ тавра вылянтарса). В чем дело? В чем дело?!

**Сасăсем**—Пар хытăрах!...

— Ав, хĕçпе хăлаçланаканнине ĕнсе чиккинчен тăхăнтарт!

—Лӳчĕркĕр лайăхрах!...

Старшинапа тиек сĕтел çинчи хучĕсене пăрахса хăварсах тараççĕ. Вĕсен хыçĕнчен староста та тухса шăвăнать, пăлханакан халăх стражнике лӳчĕркесе тăкса, унăн хĕçне татăкăн-татăкăн хуçкаласа тăкать. Юлашкинчен, стражнике, урнă йытта хуса янă пек, ялтан хăваласа яраççĕ. Пуху лăпланать.

**Хветут.** Ваççук ăçта? Ваççука тупăр!..

**Сасă.** Ваççук кунта, Хветут мучи.

Халăх Ваççук еннелле çаврăнать. Шăп.

**Хветут** (В а ç ç у к  в ы р т н ă  ç ĕ р е  п ы р с а). Эх, самана!.. Мĕн чухлĕ юн, мĕн чухлĕ çамрăк пуç сая каять... Ваççук, ывăлăм, сывă-и эс?

**Ваççук** (й ы н ă ш н ă  с а с ă п а). Сывах, мучи... Ан кулян... Ан кулянăр, халăхсем!.. Кукурнăçăн пуçламăшĕ çеç-ха.

Юнланса-суранланса пĕтнĕ Ваççука юлташĕсем çĕклесе илсе тухса каяççĕ. Сцена пушă юлать. Пауза.

**Элеçук** (с ы х л а н а-с ы х л а н а  к ĕ р е т). Никам та çук... Пурте саланса пĕтнĕ. Мĕтри ăçта-ши?

**Мĕтри** (х у р а л  п ÿ р ч ĕ  ч ÿ р е ч и  в и т ĕ р  х ă р а в ç ă л л ă н  т у л а л л а  п ă х а т ь). Элеçук!..

**Элеçук** (ш и к л е н с е). Кам унта?..

**Мĕтри**. Эпĕ, Элеçук...

**Элеçук.** Мĕтри, эсĕ-и? Мĕн туса ларатăн эсĕ хурал пÿртĕнче? Тух хăвăртрах!

**Мĕтри** (т у х с а). Эх, çапăçрĕç те кунта!... Пĕлетĕн-и, Элеçук, хайхи Ваççук лекрĕ вĕт пирĕн серепене.

**Элеçук.** Вăйлă пачĕç, тет, ăна. Нумайччен асăнĕ-ха...

**Мĕтри**. Çук, вăл мĕскер...Вĕт стражнике хирĕç чăн малтан Ваççук тăчĕ. Халăха та вăлах пăлхатрĕ. Халех ут утлан та—вĕçтер вулăса. Вара Ульяна йĕвенĕ те санăн аллунта пулĕ...

**Элеçук.** Тĕрĕс, Мĕтри, тĕрĕс! Аслă ача эс...

ЧАРШАВ

## ТĂВАТТĂМĔШ КАРТИНА

Ульянасен пӳрчĕ. Ульяна пĕчченех сĕтел хушшинче çыру çырса ларать. Çемçе кăна çемĕ илтĕнет.

**Ульяна** (ç ы р у н е ç ы р с а п ĕ т е р с е н, в у л а с а п ă х а т ь). „Юратнă тантăшăм! Чĕрем хĕрӳ вутри пек çуннă вăхăтра манăн кăмăлăма пусарма пултарас çын пĕр эсĕ кăна, çавăнпа та эпĕ никам патне те мар, сан патна çыратăп. Мана кăвар пек хуйхă çине тăратса хăварчĕç... Пĕрне-пĕри ĕмĕр манмасла сăмах панă хыççăн, Ваççука манран уйăрчĕç. Уйăрчĕç, тантăшăм, хĕрхенмерĕç. Чухăнсене хӳтĕлессишĕн пуçне çухатрĕ вăл. Ăна, ик аллине хыçалалла çыхса, вăрра намăслантарнă пек намăслантарса, илсе тухса карĕç. Ял халăхĕпе ăсатса ятăмăр эпир ăна... Ах, пуçăм, пуçăм! Ăçта кайса чикем-ши эпĕ хамăн пуçăма, тантăшăм..." (В у л а с а п ĕ т е р е т т е, й ы в ă р р ă н с ы в л а с а и л е т.) Мĕн тума çыратăп-ха эпĕ ку сăмахсене?.. Кам патне? Кам манăн тантăшăм? Вăл çук, ăна, хурчăкасем килсе, чăх чĕппине тытса кайнă пек, тытса карĕç: эп пĕччен, тăр-пĕччен тĕнчере... „Эх, тусăмçăм Санюк... Эс пиччусемпе пĕрле сулă юхтарма

карăн та, ним те курмарăн... Ним те илтмерĕн... Ялта пулсан, хăть эс те пулин килĕттĕн манăн хуйхăллă чĕреме лăплантарма..." (П а у з а.) Паян Санюкăн ашшĕ те сулă çине каять. Парса ярас унпа пĕрле Санюк патне çак çырăва... (А л л и н ч и çы р у н е т ă в а т к ă л л а т ь т е, ç ĕ н ĕ р е н ш у х ă ш а к а я т ь.) Тепĕр-тесен, мĕн тума кирлĕ чĕрен кашни таппине çынна уçса пама? (П а у з а.) Мĕн тума кирлĕ хуйхă çинчен çынна каласа парса салхулантарма? Элле вĕсен хăйсен хуйхи-суйхи çук-и? (Ч ӳ р е ч е п а т н е п ы р с а п ă х а т ь. К а л л е х ш у х ă ш а к а я т ь.) Акă, манăн çуралса-ӳснĕ тăван ял аллаппи çинчи пек курăнса выртать. Авă, ĕлĕк Ваççукпа пĕрле уявра çӳренĕ урамсем... Акă, хамăр умри кăтра хурăн. Ку хурăн айĕнче час-часах Ваççукпа пулас пурнăç çинчен чĕкеç пек чĕвĕлтетсе лараттăмăр. Халь пĕр-пĕччен ларать вăл, хăйĕн хуйхине пĕтĕм çут тĕнчерен пытарнă пек туйăнать. Ман пекех...Авă, анкартисем хыçĕпе тулли шывлă пĕчĕк çырма авкаланса юхса выртать. Вăл çырмара эпĕ пĕчĕккĕ чухне шак чулĕсем пухаттăм. Авă, Турикас çекле пек кукăрăлса тăсăлать... Çавăнта пурăнатчĕ манăн теветкел чĕреллĕ Ваççук... (И ĕ р е т.) Çук!.. Текех ĕнтĕ ăна нихăçан та, нихăçан та курас çук эпĕ... (Й ĕ р е т.)

Музыка хытăрах янăрать.

### Речитатив

Улăхрăм эпĕ çӳлĕ ту çине
Телейĕм сӳннĕ самантра.
Манран çӳлте, ман тĕлте,
Кăвак пĕлĕт айĕнче,
Ăмăрткайăк вĕçет ярăнса.
Мĕншĕн вĕçет-ши çав кайăк,
Ту йĕри-тавра явăнса,
Çӳлтен аялалла вирхĕнсе?
Йăвине тустарма улăхман-ши, тет пуль,
Чĕпписене тытма хăпарман-ши, тет пуль.
Эп ун йăвине тустарма улăхман,
Чĕпписене тытма хăпарман.
Улăхрăм эпĕ çӳлĕ ту çине,
Çӳлтен аялалла пăхмашкăн,
Хамăн савнă тусăма курмашкăн.

Музыка çĕнĕрен хуллен, хурлăхлăн янăрать. Ульяна йĕрет.

Çук!.. Текех ĕнтĕ ăна нихăçан та, нихăçан та курас çук эпĕ... Ăçта-ши вăл халь?! Мĕнле тӳсет-ши çак чăтма çук хурлăха унăн чĕри?!. Эх, улталлă тĕнче, йывăр самана... Ваççук!.. Ваççук!..

МУЗЫКА

**Ульяна**

Юхаççĕ пĕлĕтсем, юхаççĕ

**Хор**

Юхаççĕ шерпет çуса,
Шерпет çуса.

**Ульяна**

Юртаç кунсем, юртаç,

**Х о р**

Юртаç ахах тăкса,
Ахах тăкса.

**Ульяна**

Эпех кăна ĕçеймерĕм,

**Х о р**

Ĕçеймерĕм çав шерпете,
Çав шерпете.

**Ульяна**

Эпех кăна пухаймарăм,

**Х о р**

Пухаймарăм çав ахаха,
Çав ахаха.

**Ульяна**

Карĕ тантăшăм, карĕ,

**Х о р**

Карĕ алă сĕлтсе,
Алă сĕлтсе.

**Ульяна**

Тарчĕ телейĕм, тарчĕ,

**Х о р**

Тарчĕ çунат хывса,
Çунат хывса.

**Ульяна**

Эпех кăна каяймарăм,

**Х о р**

Каяймарӑн ху савнипе,
Ху савнипе.

**Ульяна**

Эпех кӑна утаймарӑм,

**Х о р**

Утаймарӑн ху телейпе,
Ху телейпе...

Музыка хурлӑхлӑн янӑрать. Ульяна куҫӗсене саппун аркипе шӑлать.

**Ульяна**. Ҫук, йӗрме кирлӗ мар, йӗрме кирлӗ мар! Ваҫҫук, Ваҫҫук, ӑҫта эс?! (П а у з а.) Ҫук!.. Тавӑрӑп, тавӑрӑп эп сире пуриншӗн те! Тавӑрӑп хамшӑн та, тавӑрӑп Ваҫҫукшӑн та!..

Музыка ҫӗнӗрен хӑватлӑн вылять.

**Ульяна**

И, ҫилсем вӗрет, вичкӗн ҫил вӗрет,
Вӑйлӑ ҫӑмӑрсем капланса килет.
Ултавах тӗнчи, йывӑр самани
Пирӗн чунсене тыткӑна илет.

**Х о р** (х ӑ в а т л ӑ н)

Ултавлӑ тӗнче, йывӑр самана
Илет пирӗн чунсене тыткӑна.

**Ульяна**

Улӑхри лаши, ҫӳрен-ех лаши,
Унӑн уринче тимӗр-ех тӑлӑ;
Маттурах каччи, сарӑ-ях ачи,
Унӑн уринче тимӗр-ех тӑлӑ.

**Хор** (хăватлăн)

Маттурах каччă, сарă-ях ача,
Унăн уринче тимĕр-ех тăлă.

**Ульяна**

Тимĕр-ех тăлă, ула-ях çулĕ...
Ĕмĕрĕ иртет Çĕпĕр çĕрĕнче,
Çĕпĕр çĕрĕнче, патша тĕрминче,
Читлĕхе хупнă ăмăрткайăк пек...

**Хор** (хăватлăн)

Çĕпĕр çĕрĕнче, патша тĕрминче,
Читлĕхе хупнă ăмăрткайăк пек...

Ульяна хорпа пĕрле юрлать.

Пахчари чечек, сарă-ях çеçке
Кĕрхи сивĕпе шанса карĕ-çке.

**Ульяна**

Маттурах каччă, сарă-ях ача, | *Пĕрле.*
**Хор**
Маттурах каччи, сарă-ях ачи... |

Пурте пĕрле хăватлăн.

Халăх ĕçĕшĕн пуçне хучĕ-çке...
Халăх ĕçĕшĕн пуçне хучĕ-çке...

Музыка хуллен кăна хурлăхлăн янăрать.

**Ульяна.** Эх, ултавлă тĕнче! Мĕншĕн, мĕншĕн пирĕн чунсене илтĕн эсĕ тыткăна?!.

Кутник çине ӳкет.

**Татьян** (ч у п с а к ĕ р е т). Аппа, аппа, сана Хветут мучи утара пыма хушрĕ. Илтрĕн-и, аппа?!. Аппа, Хветут мучи Ваççукран хыпар илнĕ, тет.

**Ульяна** (с а с а р т ă к п у ç н е ç ĕ к л е с е). Чăнах-и?!.

**Татьян**. Чăнах ара... Мĕншĕн так ахаль суяс ман сана...

**Ульяна**. Каяс хăвăртрах Хветут мучи патне. (К а я т ь.)

ЧАРШАВ

# ПИЛЛĔКМĔШ КАРТИНА

Ешĕл вăрман хĕрринчи пысăк уçланкăра Элеçуксен утарĕ. Сайра йывăççем хушшипе вĕллесем курăнса лараççĕ. Сылтăм енче—пĕчĕк чŭречеллĕ, лутра алăклă утар пŭрчĕ. Чаршав уçăлнă чух Хветут мучи утар пŭрчĕ умĕнчи ҫтунката çинче чĕлĕмĕ ăшне табак тултарса ларать. Çийĕнче—сăранланса кайнă кивĕ кĕрĕк, уринче—çăм атă.

МУЗЫКА

**Речитатив**

Çерем пăсаççĕ, хăяр акаççĕ,
И, час шăттăр тесе, шывсем сапаççĕ.

Çĕн Улхаш ачи, сарă-ях ачи,
И, çухатрĕ пуçне халăх ĕçĕшĕн.

Çĕн Улхаш лаши, тимĕрех лаши,
И, унăн уринче тимĕрех такан.

Çĕн Улхаш ачи, сарă-ях ачи,
Унăн уринче тимĕрех тăлă.

Тимĕрех тăлă, ула-ях çулĕ,
И, ĕмĕрĕ иртет Çĕпĕр çĕрĕнче.

Ваççук амăшĕ ылханать хытă,
И, патша саккунне çĕр çăттăр, тесе.

**Хветут мучи.** Иртрĕ ĕмĕр... Ним ыррине те курмарăм... Эх, тĕнче... Пĕререн-пĕререн илет тыткăна пирĕн хурлăхлă, йăраскалсăр чунсене...

Элеçукпа Мĕтри кĕреççĕ.

**Элеçук.** Ну, Хветут мучи, хăнана килтĕмĕр...

**Хветут мучи** (л а р н ă ç ĕ р т е н т ă р с а). Аван, пит аван...

Элеçукпа Мĕтри хăмаран тунă сĕтел хушшине кĕрсе лараççĕ.

**Элеçук.** Хветут мучи!.. Илсе тух-ха пире валли çĕр айĕнче виçĕ çул выртнă сим-пыла! Ваççук пуçĕ çухалнă ятпа асăнса ĕçер-ха, Мĕтри тус!..

**Хветут мучи.** Аçу пĕлсен—вăрçмĕ-ши ара, Элеçук ывăлăм... Аçу ан пĕлтĕр теп...

**Элеçук** (ç и л е н с е). Курмастăн-им эс, кам ларать сан умăнта? Эп, атте пекех, пĕртан хуçа кунта. Илтетĕн-и?!.

**Хветут мучи.** Илтетĕп, ывăлăм, илтетĕп...

**Элеçук.** Илтен пулсан, илсе тух!..

Хветут мучи сим-пыл илме тухать.

**Мĕтри.** Ну, Элеçук, Ваççук пирĕн серепене лекрĕ, лекрех... Пултартăмăр вĕт?

**Элеçук** (х а в а с л а н с а). Халь ĕнтĕ вăл нихăçан та калле çаврăнса килеес çук... Çапла-и, Мĕтри тус?

**Мĕтри** (к у ш т а н л а н с а). Çапла, çапла, Элеçук.

**Элеçук.** Ĕнтĕ халь, унăн пикине, Ульянана та активсе пăхăпăр. Çапла-и, Мĕтри тус?

**Мĕтри.** Çапла, çапла.

**Элеçук.** Авă, сим-пыл та килсе çитрĕ...

Хветут мучи витрепе сим-пыл, тиркĕпе караслă пыл сĕтел çине лартать.

**Хветут мучи** (к у р к а с е м ç и н е с и м- п ы л н е т у л т а р с а). Акă, ĕçĕр-çийĕр, теветкел йĕкĕтсем!..

Элеçукпа Мĕтри куркисене шанклаттара-шанклаттара ĕçеççĕ.

**Элеçук.** Эй, старик!.. Сип ту хăнусене майлă-рах! Мĕн сухална сӳслентерсе тăратăн? Элле курмастăн-им, кам ларать сан умăнта?!.

**Хветут мучи** (я п ш а р ă н). Ĕçĕр-çийĕр, мана ан ӳпкелĕр... (К у р к и с е м ç и н е с и м- п ы л т у л т а р а т ь.) Ĕçĕр, ĕçĕр, сăйланăр...

**Элеçук** (м ă н к ă м ă л л ă н). Эй, старик!.. Кăларса ларт хăнусем умне хăватлă эрехне! Элле курмастăн-им эс, кам ларать сан умăнта?!.

**Хветут мучи** (ç е м ç е к ă м ă л п а). Ну, ан айăплăр ывăлăмсем, кăна паян ниепле те тупма пултараймастăп...

**Элеçук** (ç и л ĕ п е). Мĕн терĕн эс?!. Мĕн терĕн эс?!. (С а с а р т ă к с и к с е т ă р а т ь т е, Х в е т у т м у ч и н е ç у х и н ч е н л ă с к а м а т ы т ă н а т ь.) Асту, сӳс тылли витĕр кăларăп эп сана, ват супнă! Чуп хăвăртрах хупаха!..

**Хветут мучи.** Ан тĕлĕнтер-ха, ывăлăм... Ай сĕтел çинчипе çитмест-им сире? Халь те, шĕкĕр турра, тайкаланакана́х пулнă ĕнтĕ...

**Элеçук.** Кам?!. Кам тайкаланать?!. Эп тайкаланатăп-и, е эс тайкаланатăн-и? Эс тайкаланатăн хытнă кăрăç, авăк çилпеле. Çĕр тайкаланать ман ура айĕнче... Эпĕ... э... Хе-хе-хе-хе!.. (К у л с а н-к у л с а н п ĕ р а й ă п с ă р с т а р и к е ç у п с а я р а т ь.) Кай теççĕ сана, хăвăртрах!

Хветут мучи пуçне усать те, ним чĕнмесĕр тухса каять.

**Мĕтри**. Давай ĕçер, Элеçук!

**Элеçук** (к у р к и с е н е т у л т а р с а). Давай ĕçер, Мĕтри! (К у р к и с е н е ш а к л а т т а р с а.) Ку курка ятарласах Ваççук пуçĕ çухалнишĕн пултăр!.. Мĕтри! Митюк! Эп сан тусу-и, е тусу мар-и?

**Мĕтри.** Тус-çке, Элеçук...

**Элеçук.** Мĕтри!.. Давай тепре, Ульяна шăпишĕн ĕçер!

**Мĕтри.** Ĕçесси ĕçĕпĕр те, анчах йĕвенсĕр лашана тытма хĕн, теççĕ. Çапах та саншăн тăрăшма пултарăп. Анчах тип кашăк çăвара çурать.

**Элеçук.** Эх, Митюк, атя, юрласа илер пĕрре!.. (Ю р л а м а п у ç л а т ь, у н х ы ç ç ă н М ĕ т р и т е ю р л а т ь.)

МУЗЫКА

Уçса ярăр пуянăн,
Ай, хапхине,

Юрласа ярăр
Маттур хĕр юррине.
Ĕçсессĕн-ех ÿсĕрсем,
Ай, кам пулмĕ,
Турă парсан
Пуян кам пулмĕ.

Музыка чарăнать. Пауза.

**Элеçук.** Мĕтри, Митюк!.. Ульянана алла ÿкерсен нимĕн те хĕрхенмĕп саншăн. Ну... пулăш эс мана, ăс пар...

**Мĕтри** (й ĕ к ĕ л т е с е). Малтан авалхи парăмна парса тат-ха, унтан Ульяна çинчен те калаçма пулĕ.

**Элеçук** (а с т у м а н п е к п у л с а). Мĕнле парăм, Мĕтри?!. Мĕнле парăм? (Й ĕ к ĕ л т е с е к у л с а.) Хе-хе-хе! Кам лектернĕ-ши ăна серепене? Эсĕ-ши, эпĕ-ши? Эх, Мĕтри, Мĕтри, култаратăн эсĕ мана...

**Мĕтри.** Эп ăс паман пулсан, Ваççук паян кун та сан çулу урлă тăнă пулĕччĕ-ха. Ун пек калаçатăн пулсан, хăтлан мĕнле пултаратăн çавăн пек. Эп урăх санăн тусу мар.

Мĕтри ура çине тăрса кайма тытăнать. Элеçук ăна хыçалтан тытса калле хăй вырăнне лартать.

**Элеçук.** Мĕтри, ман çук тетĕн-им? Пирĕн çук тетĕн-им? Я! (К ĕ с ъ и н ч е н п ĕ р п а ч к а у к ç а к ă л а р с а.) Акă, ку мĕн, куратăн-и?

**Мĕтри.** Куратăп-çке...

**Элеçук.** Шалишь!.. Тулькă кайран, ĕçне тунă хыççăн... (*Укçине каллех кĕсъине чикет.*) Э-э, ан çилен, Мĕтри, Митюк... Эс ман тус-и, е мар-и?

**Мĕтри.** Тусу-çке, Элеçук...

**Элеçук.** Пар аллуна...

Хĕрĕнкĕленсе çитме пуçланă икĕ тус пĕр-пĕрин аллине хыттăн чăмăртаççĕ. Çак вăхăтра ялтлатса çиçĕм çиçет. Аслати кĕмсĕртетет.

**Элеçук.** Аслати кĕмсĕртетрĕ мар-и çав, Мĕтри...

**Мĕтри.** Аслати авăтрĕ çав... (*Итлесе.*) Чим... Хĕрарăм юрлани саси та илтĕнет мари-и?..

**Элеçук.** Ăçта? Мĕнле хĕрарăм?..

**Мĕтри.** Ав, итле... (*Иккĕшĕ те итлесе тăраççĕ.*)

Ульяна юрлани илтĕнет.

МУЗЫКА

И, çилсем вĕрет, вичкĕн çил вĕрет,
Хаяр аслати капланса килет.
Кĕмсĕртет, кисрет, тĕнчене чĕтрет,
Патша тĕрмине аркатса тĕпрет!

Музыка чарăнать. Каллех аслати авăтать.

**Мĕтри.** Тăвăллă çумăр килет... Атя, кĕрер пÿрте...

**Элеçук.** Давай, кĕрер эппин... (*Ура çине тăраççĕ.*)

**Мĕтри.** Элеçук, эс ÿсĕрĕлме пуçламарăн пуль те...

**Элеçук** (м у х т а н с а). Çук, çук. Пирĕн пулĕ, Мĕтри... Пирĕн пурте пулĕ. Пирĕн пур чухне, эс те мĕскĕне юлмăн...

Çĕнĕрен Ульяна юрлани илтĕнет.

Хурама та пĕкĕ,
Ай, йĕс үнкă,
Çурма çула çитсен,
Ай, хуçăлчĕ.
Айванах та пуçăм,
Çамрăк чунăм,
Çурма çула çитсен,
Ай, хур пулчĕ.

Музыка чарăнать.

**Мĕтри** (Э л е ç у к а ч а в с и п е т ĕ р т с е). Илтетĕн-и? Епле илемлĕ юрлаççĕ вăрманти шăпчăксем каçа хирĕç...

**Элеçук** (м ă н к ă м ă л л ă н). Юрлаччăрах вара, унта пирĕн мĕн ĕç пур!..

**Мĕтри.** Эх, Элеçук! Çавна-та чухлаймастăн пулсан, кăларса хур часрах çирĕм пилĕк тенкӳне сĕтел çине... Халех Ульяна сан аллунта пулĕ.

**Элеçук** (у р ă л с а к а й с а). Чăнах-и?.. Ме, ил!..

**Мĕтри.** Атя пӳрте, кунта çил вĕçтерет...

Утар пӳртне кĕреççĕ. Мĕтри чӳрече витĕр тĕрлĕ еннелле пăхкалани курăнать. Ульяна утар пӳрчĕ патнелле çывхарма пуçласан, пӳртрен кашкăр пек сиксе тухать те, Ульяна килекен еннелле чупать. Çиçĕм çиçет. Аслати авăтать. Çăмăр çăвать. Çак самантра Ульянан: „Ай, ан çулăх“, „ай, ай“, „çăлăр-а-ах!“—тенĕ сасси илтĕнет. Мĕтри йĕп-йĕпе Ульянана кăшкăрта-кăшкăрта утар пӳрчĕ патнелле сĕтĕрсе пырать. Ульяна туртăшать.

**Элеçук** (пӳрт алăкне уçса). Мĕтри!..

**Мĕтри**. Ме, Элеçук, хăвăн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне! (Элеçук арăслан пек пӳртрен сиксе тухать. Ульяна туртăшать. „Ай, ай", „çăлăр-а-ах!" тесе кăшкăрать, анчах сасартăк çак самантра Элеçук Ульянан саппунне туртса татса çăварне хупласа çыхать. Унтан Мĕтрипе иккĕшĕ Ульянан аллисене хыçалалла туса çыхасçĕ.) Ну, Элеçук, ĕнтĕ халь мĕн тăвассу килет, çавна ту!.. Ав, илсе кĕр пӳрте!..

**Элеçук** (Ульянана йĕкĕлтесе). А, лекрĕн-и ман алла!.. (Пӳрте сĕтĕрсе кĕрет. Мĕтри тул енчен утар алăкне питĕрсе каять. Пӳртре Ульяна вăйсăррăн ахлатни илтĕнет. Пĕчĕк пауза хыççăн Хветут мучи килсе çитет.)

**Хветут мучи**. Эй!.. Мĕн çуйăхаççĕ унта? (Алăк тĕккине илет.) Ха, питĕрсе хăварнă... Шалтан та питĕрнĕ... Темĕн, ку ыррах мар пуль... Уç, казенка эрехне илсе килтĕм! (Алăка тул енчен тапса сирпĕтет.)

Хветут мучине хирĕç пӳртрен Ульяна макăрса тухать. Унăн çи-пуçне çуркаласа пĕтернĕ, çӳç-пуçĕ сапаланчăк. Аллисене хыçалалла çавăрса çыхнă.

**Ульяна** (йĕрсе). Ах, мучи!.. Мĕншĕн маларах çитмерĕн-ши эс?.. Ах, мăшкăл, мăшкăл...

**Хветут мучи.** Тăхта-ха, хĕрĕм... Кам ку таранах мăшкăласа пĕтерне сана, мĕскĕне?.. (Ульянан аллисене салтса ярать.)

**Ульяна.** Элеçук... Эх, пуçăм!.. (Макăрса чупса тухса каять. Çак вăхăтра пӳртрен пиншак тӳммисене тӳрлеткелесе Элеçук тухать.)

**Хветут мучи** (çилĕпе эрех кĕленчине Элеçук еннелле тăснă пек туса). Акă, илсе килтĕм... Хама валли тупăк тутарма пухнă юлашки укçапа илтĕм...

**Элеçук** (ирсĕррĕн). Вăт аван ку, пит аван...

**Хветут мучи** (эрех кĕленчине Элеçук сăмси умнех тăсать. Элеçук эрех кĕленчине тытма тăрсан, Хветут мучи хăвăрттăн аллинеçӳлелле çĕклет те пĕтĕм вăйĕпе Элеçука тулли кĕленчепе çамкинчен çапать). Ме, чых!.. (Элеçук кайса ӳкет.) Пĕтнĕ пуç пĕттĕр, эс те тĕнчере ан пурăн!..

Мĕтри чупса кĕрет.

**Мĕтри** (Хветут мучине çухаран çавăрса тытса). Ах, ват супнă! Эсĕ те Ваççук хыççăн каятним-ха!.. Сана куншăн чĕреллех çĕр ăшне чиктеретĕп!..

ЧАРШАВ

## УЛТТĂМĔШ КАРТИНА

Утар пӳрчĕ умĕ. Уйăхлă каç. Çăлтăрсем йăлкăшаççĕ. Ульяна сĕнксе кĕрет. Ниçта ларма-тăма пĕлмест.

**Ульяна.** Ах, мăшкăл-çке, мăшкăл! Епле йăтса çӳрес ман ăна хĕр пуçăмпа?.. Епле курăнас варланчăк ăшăмпа тĕнче куçĕ умне?.. Епле курăнас юлташсемпе тантăшсен куçĕ умне?.. Кама кирлĕ эп хамăн хур пулнă тивлетĕмпе?.. Кама кирлĕ пылчăк ăшне таптаса тăкнă ăрăскалăмпа?.. (Х у л л е н к ă н а у т м а т ă р а т ь.) Ăçта каятăп эп, мĕскер шыратăп?.. (Ч а р ă н а т ь.) Телейĕме шыратăп-и, пурнăçăма-и? Телейĕме манне тимĕр сăнчăрпа сăнчăрларĕç. Чунăма пуш-пушă туса хăварчĕç... Пушанса юлнă чуншăн нимĕнле пурнăç та кирлĕ мар. (Т а т а к ă ш т у т а т ь т е, ч а р ă н а т ь.) Ăçта эпĕ?.. Кирек ăçта пулсан та пурпĕрех халь маншăн... Пурпĕр малалла кайма çулсем пĕтсе çитрĕç, каялла каймашкăн халăм тăрса юлмарĕ. Пурпĕр халь маншăн... Пĕтĕмпех йышăнатăп эпĕ хамăн телейсĕр шăпама... (П ӳ р т ç у м ĕ н ч и п ы с ă к т у р а т л ă й ы в ă ç у м н е ч а р ă н а т ь.) Çакăнта... Çакăнта лăплантарăп эп хуйхăм-суйхăма... Çакăнта вĕçлĕп мĕскĕн пурнăçăма... (Т у н к а т а ç и н е х ă п а р-

са тăрать. Унтан пилĕкĕнчи шерепеллĕ пиçиххине салтса илет. Пĕр вĕçне ункăласа мăйкăч тăвать, тепĕр вĕçне хурама тураттинчен кармашса çыхса хурать. Пĕр самант шухăша кайса тăрсан, мăйкăч ункинчен тытать). Сывă пулăр, ял-йышсем!.. Сывпулăр, тăванăмсем!.. Сывă пул, юратнă тăван çĕршывăм!.. Сывă пул, мана мăшкăл тунă тĕнче!.. (Ульяна мăйкăч ăшне пуçне чикес умĕн, сасартăк пĕлĕт хушшинчен туллиуйăх шăвăнса тухать. Сĕмвăрмана шупка-кăвак çутăпа çутатса ярать. Ульяна уйăх çутине ытараймасăр тĕрлĕ енне пăхать.) Ăçта эпĕ?.. Мĕн хăтланатăп эпĕ?.. Э-э, апла иккен... Утар... Анчах мĕн тума килсе тухнă эп кунта?..

МУЗЫКА

Улăхри лаши, çӳрен-ех лаши,
Унăн уринче тимĕр-ех такан;
Маттурах каччи, сарă-ях ачи,
Унăн уринче тимĕр-ех тăлă.

Тимĕр-ех тăлă, ула-ях çулĕ...
Ĕмĕрĕ иртет Çĕпĕр çĕрĕнче;
Çĕпĕр çĕрĕнче, патша тĕрминче,
Читлĕхе хупнă ăмăрткайăк пек.

**Музыка хуллен, хурлăхлăн янăрать.**

Мĕн хăтланатăп эпĕ? Элле тĕнче мăшкăлĕ ман пуçăм çийĕнче кăна-им? Мĕн тума çĕклетĕп аллăма?.. (А л л и н ч и м ă й к ă ч н е к ă р т а х т у р т с а т а т а т ь т е, а я к а л л а ы в ă т а т ь.) Çук, вилме кирлĕ мар! Мăшкăла вилĕмпе нихăçан та парăнтараймăн. Тавăру, тавăру кăна витĕмлĕ пулĕ... (Т а р ă х а р а х, х ĕ р ӳ л л ĕ н.) Тавăрăп!.. Тавăрăп эп сире пуриншĕн те! Тавăрăп хамшăн та, тавăрăп Ваççукшăн та! Анчах мĕнле?.. Кам мана пулăшĕ сирĕн шалçăрсене тултарма? Кам пулăшĕ?.. (Ш у х ă ш а к а й с а т ă р а т ь.) Çук... (П а у з а.) Пĕрерĕн пĕрерĕн тип шара ӳкерсе пырăп эп вĕсене. Вăйăм çитеймесен—шăлăмпа, шăлăм витмесен—вутпала. Çапах та пĕлĕп камран тытăнса, кама пĕтермеллине!..

Ульяна утар пӳртĕнче шăши куçĕ пек мĕлтлетсе ларакан лампа çутине курса, чӳрече витĕр шалалла йăпшăнса пăхать.

**Ульяна.** Кайнă чуниленсем! (П ӳ р т е к ĕ м е т ă р а т ь. П ӳ р т а л ă к ĕ у м ĕ н ч е в ы р т а к а н Х в е т у т м у ч и н ă й к ă ш с а и л е т.)

**Хветут мучи.** Кам унта?

**Ульяна.** Эпĕ, Хветут мучи... Сана... Сана хĕнерĕç-им вĕсем?! Сана та хĕрхенмерĕç-им?..

**Хветут мучи.** Çĕмĕрчĕ ват шăмшака, хĕрĕм, çĕмĕрчĕ... Хветут мучу урăх ура çине тăраймасть пуль ĕнтĕ...

**Ульяна.** Хветут мучи, шăрпăк кирлĕ мана!

**Хветут мучи.** Шăрпăк?!. Ил, ил ав, пӳртре, пичурккăра. Çапла, хĕрĕм, мăшкăларĕç... (У л ь я н а х ă в ă р т п ӳ р т р е н ш ă р п ă к и л с е т у х а т ь.)

**Ульяна.** Сана та хĕрхенме пĕлмерĕç эппин. Ват çын çине алă çĕклеме епле хăяççĕ-ши? Намăсĕ ăçта-ши? Кăштах тăраятни, мучи, ак çакăнта, сак çине çĕклесе лартам-ха. (Х в е т у т а е р и п е н ç ĕ к л е с е т ă р а т а т ь, с а к п а т н е л л е ç а в ă т с а п ы р с а л а р т а т ь. Х в е т у т ç и н е-ç и н е х н ă й к ă ш с а и л е т.) Ак çакăнта лар-ха, мучи... Эх, путсĕрсем!.. Каçар, мучи, тавăрмасăр чăтса тăма халăм çук... Эп каям-ха, сана валли сĕт тупса килем.

**Хветут мучи.** Чипер кай, хĕрĕм. Чипер çӳре, хăвна ху сыхларах çӳре, хĕрĕм...

**Ульяна.** Юрĕ, Хветут мучи... (К а я т ь. Х в е т у т м у ч и х у л л е н т ă р а т ь. П а у з а.)

**Хветут мучи.** Карĕ. Мĕскĕн хĕрача. Мĕн пирки асапланать-ши? Мĕн айăппа? (Х у л л е н, х у р л ă х л ă н м у з ы к а я н ă р а т ь.) Çитмĕл çула çитрĕм, нумай чăтрăм, юлашкинчен тулса тăкăнчĕ пулас, чăтса тăраймарăм. Пытарăнса выртнă çиллĕм палкаса тухрĕ пуль... Темĕн, хăтăлаймастăп пуль ĕнтĕ. Ваççук çулĕ çине тăма тӳр килсе тухрĕ пуль?.. Виличчен Çĕпĕр çулĕпе уттарса пăхас терĕç пулмалла. Мĕн тăвăн, тĕнче мăшкăлĕнчен тарса хăтăлаймăн... Иртрĕ пуль ĕнтĕ ман тавăрасси. Ваççук пек çамрăк пулнă пулсан, ĕмĕтленме те юрĕч-

чĕ... (Пĕр вăхăтлăха пуçне аллипе тытса ларать.)

Пăртак тăрсан, вăрманăн тепĕр енче, хутор хуралти хыçĕнче хĕп-хĕрлĕ вут ялкăшма тытăнать. Шăв-шав. Музыка тревога кĕвви калать. Хветут ура çине тăма хăтланать, ыратнипе нăйкăшса сак çине кайса ӳкет. Инçетре кăшкăрнă сасăсем илтĕнеççĕ.

—Пужар! Çунатпăр!...

—Эй, кам тарать унта! Ульяна вĕт çав...

—Ан тарт ăна, Мĕтри!

—Ан тарт!..

—Хупăрлăр! умне тухăр!..

**ЧАРШАВ**

## ÇИЧЧĔМĔШ КАРТИНА

Мăн çул. Çул хĕррисенче йĕркерен лартса кайнă ват хурăнсем. Ульянапа Хветут мучине кăвак мундирлĕ икĕ конвоир уттарса пыраççĕ. Пĕр-ик утăм утсан, канма лараççĕ. Ульянапа Хветут мучи хуллен юрлаççĕ.

МУЗЫКА

И, çилсем вĕрет; вичкĕн çил вĕрет,
Вăйлă çăмăрсем капланса килет.
Ултавах тĕнчи, йывăр самани
Пирĕн пурнăçа тыткăна илет.

**1-мĕш конвоир.** Юрамасть сире юрлама! Илтетĕр-и?!

Ултавах тĕнчи, йывăр самани
Пирĕн пурнăçа тыткăна илет.

**1-мĕш конвоир** (ç и л ĕ п е.) Молча-ать! (Ч ĕ н п и ç и х х и ç у м ĕ н ч и к ĕ с к е с а л а м а т- н е в ĕ ç е р т с е и л е т.) Хушман сире юрлама!

Пахчари чечек пек, сарă-ях çеçке
Кĕрхи сивĕпе шанса карĕ-çке.
Маттурах каччи, сарă-ях ачи,
Халăх ĕçĕшĕн Çĕпĕре карĕ-çке.

**1-мĕш конвоир** (У л ь я н а н а с а л а м а т- п а х у л п у ç ç и у р л ă ç а п а т ь). Молча-ать! Пăлхавçăсен юррине юрлама-и-ха тата? Тăр!.. Ут малалла!

**2-мĕш конвоир.** Ан тив эс вĕсене!..

**1-мĕш конвоир.** Эс тата мĕн?!. Вĕсемпе пĕрле ларса юрлама шутламастăн пуль те?!.

**2-мĕш конвоир.** Эс ман çине ан кăшкăр. Эпĕ хам мĕн тунине хам пĕлетĕп. (Пауза.) Пирĕн, хура халăхăн, пурин те кун-çулĕ çаплалла. Эпир пурсăмăр та хĕн-хур айĕнче тарăхатпăр...

**Хветут мучи.** Çапла тăванăм... Тĕрĕс сăмах... Ак эп çитмĕл çула çитрĕм... Масар çине кайма ĕмĕтленсе пурăнасси çеç юлнăччĕ. Хĕн-хур вучаххи иксĕлмен, Çĕпĕре кайма тӳр килсе тухрĕ ав... Пурнăçа пĕлме çук çав ăна, ачсемĕр, пурнăç çулĕ вăл—тумхахлă.

**1-мĕш конвоир.** Давай, тăрăр, утăр малалла! Эсир супĕлтетнине итлесе ларсан кунта...

Пурте тăраççĕ. Малалла утма тытăнсан, сцена хыçĕнче урапа çывхарнă сасă илтĕнсе каять.

**Сцена хыçĕнчи сасă:** Тпру-у-у!..

**Ваççук сасси.** Шыв, шыв ĕçесчĕ... Ах, пăчă... Ăшчик çунать...

**Сцена хыçĕнчи сасă.** Чим-ха, вырт эсĕ, наччас, ав çавсем патне кайса пăхам-ха!..

**Ваççук сасси.** Ах, ăшчик...

Конвоир кĕрет.

**Конвоир.** Шыв çук-и сирĕн, тăвансем?..

**1-мĕш конвоир.** Шывне тупма пулĕ-ха ăна. Ăçталла çул тытатăр. Инçете-и?

**Конвоир.** Арестанта больницăна леçсе ямалла терĕç. Çĕпĕр çулĕ çинче, этаппа илсе кайнă

чух, чирлесе ӳкнӗ, имӗш. Йӑлӑхтарчӗ, эсрелӗ, те-ек нӑйкӑшса пырать. Шыв ыйтса тинкене кӑларчӗ. Ӗҫтерес штоль. Лӑплантӑр пӗреххут.

Ҫак вӑхӑтра Ваҫҫук аран-аран сулӑнкаласа тухать. Вӑл шурса кайнӑ, куҫӗсем путӑк, урисенче сӑнчӑр чӑнкӑртатса пырать. Вӑл Ульянапа Хветут мучи ларнӑ ҫӗре уткаласа ҫитет те ӳпне ӳкет.

**Ваҫҫук.** Шы-ыв...

**Конвоир** (сасартӑк сехри хӑпнипе). Ӑнман! Ман пуҫа ҫиес терӗн-им? Марш, урапа ҫине!.. (Ваҫҫука тапать.)

**Ваҫҫук.** Ах... Ӑшчик... Шы-ыв...

**Ульяна** (Ваҫҫук ҫине тинкерсе пӑхать, унтан сасартӑк палласа илсе, шари! кӑшкӑрса ярать те, Ваҫҫук ҫине ӳкет). Ах!.. Ваҫҫук! Ваҫҫук! (Ӗсӗклесе йӗрет.)

**Хветут мучи.** Ваҫҫук, эсӗ-им, ывӑлӑм?.. Эх, мӗскӗн... Пӗтерчӗҫ пулать ҫамрӑк ӑмӑрткайӑка.

**Ульяна** (чӗркуҫленсе ларать, Ваҫҫука пуҫран ачашлать). Ах, Ваҫҫук, уйӑрчӗҫ-ҫке пире иксӗмӗре!

**Конвоир** (ним тума аптраса). Марш урапа ҫине... Ӑнман! Тупнӑ савӑшмалли вырӑн!.. (Ульянапа Ваҫҫук вӑл кӑшкӑрнине хӑлхана чикмеҫҫӗ.)

**2-мӗш конвоир.** Чул чӗреллӗ этем!.. (Куҫҫулне шӑлкалать.)

**Хветут мучи.** Ҫакӑн пек ҫӗрте курнӑҫмалла пулса тухрӗ пулать... Эх пурӑнӑҫ!..

**1-мӗш конвоир** (Ульянапа Ваҫҫука). Ну, ҫитӗ!.. Ырантан тепӗр кунне Хусана ҫитмелле... (Лешсем хускалманнине кура.) Кама калатӑп! Утӑр малалла!..

**Хветут мучи.** Кӑшт та хӗрхенмелле мар-шим? Ма тиветӗр?.. Юлашки хут курнӑҫма ирӗк панӑшӑнах пысӑк айӑп пулмӗ-ҫке сире.

**1-мӗш конвоир** (Хветута). Супӗлтетсе лар-ха! Молча-ать! Давай, давай утӑр!

**Ульяна.** Ваҫҫук!.. Ӗмӗрлӗхех-шим?! Тек нихӑҫан та курса савӑнаймӑп-шим? (Ӗсӗклесе йӗрсе ярать, конвоир Ваҫҫука сӗтӗрме пуҫлать, Ульяна уйӑрӑлмасть, вӑл Ваҫҫука хытӑ ҫатӑрласа тытнӑ.) Ямастӑп! ямастӑп!.. (1-мӗш конвоир Ваҫҫукпа Ульянана туртса уйӑрать.) Ах, Ваҫҫу-ук!..

**Ваҫҫук** (Ульянана тин палласа илет). Кам эсӗ? эсӗ... Эс... Ульяна-ҫке!.. Ульяна, чунӑм!.. (Конвоирсене) Ан ҫулӑхӑр! ман ҫумма! Ан ҫулӑхӑр! Ульяна, чунӑм, савнӑ чунӑм!.. Ӗмӗтленменччӗ... (Ҫӗре тӳплетсе ӳкет.)

Конвоир Ваҫҫука сӗтӗрсе илсе тухса каять. Ульяна ӗсӗклесе выртать. Тӑрсан-тӑрсан 2-мӗш конвоир ӑна ҫӗклесе тӑратать.

**2-мӗш конвоир.** Ну, атя, атя! Ан тапӑлтатса тӑр!

**Хветут мучи.** Утар пулӗ, хӗрӗм... Ҫак тӗнче сӑнчӑрне татма вӑй ҫитерсенччӗ... Пулаймарӗ пуль ҫав, хӗрӗм. Ватӑлтӑм.

**Ваççукăн вăйсăр сасси.** Ульяна, Хветут мучи... Сывă пулăр!

**Ульяна.** Сывă пул, Ваççук!

**Хветут** (ерипен кайма пуçтаранаççĕ). Çаканпа вĕçленет пуль ĕнтĕ пирĕн мĕскĕн пурнăç...

**Ульяна.** Çук, Хветут мучи, ку пурнăçăн вĕçĕ мар, пуçламăшĕ çеç-ха! (Конвоирсем Ульянапа Хветут мучине илсе тухса каяççĕ.) Сывă пул, Ваççук!..

МУЗЫКА

И, çилсем вĕрет, вичкĕн çил вĕрет,
Хаяр аслати капланса килет.
Кĕмсĕртет, кисрет, тĕнчене чĕтрет,
Патша тĕрмине аркатса тĕпрет.

**ЧАРШАВ**

Редактор **Стихван Шавлы.**

Подписано к печати 19-IX-41 г. Тираж 2700 экз.
НТ-5114. Об'ем 1,5 п. л. Заказ № 1406.

г. Канаш, типография Управления издательств
и полиграфии при СНК Чув. АССР.

Цена 1 р. 50 коп.

МИХАИЛ БЕЛОВ

НАЧАЛО ЖИЗНИ

Драма в 7-и картинах

Госиздат ЧАССР
1941